ÇАМРĂК

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе министерстви пулăшнипе

Отчет

«Çамрăк журналистăн» иртнĕ кăларăмĕсенче заметкăпа корреспонденци, интервью пирки тĕплĕ калаçу пулнăччĕ. Паян вара периодика пичетĕнче час-час тĕл пулакан тепĕр жанр – отчет пирки тĕплĕнрех калаçăпăр.

Расçейре пичетленсе тухса тăракан тĕрлĕ издани страницисенче, радиотелевиденире те, ку жанр тахçанах анлă сарăлма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Историе пăхас пулсан, Пĕрремĕш Петĕр патша вăхăтĕнчех «Ведомости» хаçатра тĕрлĕ мероприяти пирки çырса кăтартма отчет жанрĕпе анлă усă курнă курăнать. Тĕрĕссипе пичет кун çути куриччен отчет мелĕпе сăмах вĕççĕн анлă усă курнă: кашни ирех патшана общество пурнăçĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмĕсем пирки хыпарласа-пĕлтерсе тăнă.

Кун пек отчетсем информаци блокĕсенчен тытăнса тăнă. Вĕсем мĕнле вырнаçнине кура кашни уйрăм информацин хăйне уйрăм пĕлтерĕшĕ пулнă. Çапла вара ятарласа шухăшламасăрах информаци жанрĕсенчи тишкерӳ-пĕтĕмлетӳ çуралнă. Çавна тĕпе хурса та пулĕ публицистикăн паянхи теоретикĕсем отчетăн икĕ тĕсне уйăраççĕ – информаци тата аналитика отчечĕсем.

Информатика отчечĕн тĕллевĕ – пуху, конференци, форум е пĕлтерĕшлĕ ытти йышши мероприяти мĕнле иртни пирки аудиторие каласа парасси. Çавна май отчета информаци жанрĕсен шутне кĕртеççĕ. Тĕрĕссипе вара отчет материалĕнче те кулленхи актуаллă проблемăсене çĕклени тата пулăмсене тарăннăн тишкерни те тĕл пулать. Журналист вулакана хăйĕн куçĕ умĕнче мĕнле ыйтусене сӳтсе явни е мĕнле пулăмсем пулса иртни пирки каласа парать.

Журналист аудиторие пулăмăн шалти тытăмне уçса пама тăрăшать. Мĕн пулса иртнине тĕплĕн çырса кăтартни чи малти вырăнта пулма пултарать. Çавăн пекех вăл тухса калаçакан кашни çыннăн е кашни фактăн хăйне евĕрлĕхне сыхласа хăварма тăрăшать. Вĕсенчен тăрать те ĕнтĕ коллективлă мероприятин структури. Ытларах чухне кун пек отчетсем парти, патшалăх, наука конференцийĕсенче тата уяв мероприятийĕсенче хатĕрленисем пулма пултараççĕ. Унта мĕн пулса иртни пурне те интереслентерет. Калăпăр, кама та пулин пысăк пĕлтерĕшлĕ награда пани пирки кăмăн пĕлес килмĕ-ха? Е тата актуаллă пулса тăракан политика, экономика, социаллă е наука проблеми интереслĕ мар-и?

Çапах та ăнланмалла ĕнтĕ, мĕн пулса иртни пирки пур чухне те тĕппи-йĕрĕпе каласа пани кирлех те мар. Хăш чухне кĕскен каласа пани те çителĕклĕ. Çавна валли отчетăн ансат мелĕ – **хроника отчечĕ** пур. Ăна телеграф оперативлăхĕпе пичетлесе кăлараççĕ. Хăйĕн тытăмĕпе вăл заметкăна çывăх.

Кун пек материалăн калăпăшĕ хаçат страницин çурринчен ытла пулмасть. Çырса кăтартассин стилĕ енчен вăл сахал сăмахлă, предложенисем пĕлтерĕн формиллĕ. Журналист фактсем пирки кăна чарăнать. Тĕплĕ калаçу вара отчет тулашне тухать. Çавăнпа та автор фактсене çырса кăтартнă чухне пулăмсен хронологи йĕркине пăхăнмасан та пултарать.

Енчен те материал авторĕ çырса кăтартнă чухне хронологие çирĕп пăхăнать, кашни фактăн содержанийĕпе паллаштарать пулсан, унăн мероприятин анлă панорами пулса тухать. Отчетăн кун пек тĕсне **анлă е тулли отчет** теме пулать. Калăпăшĕпе кун пек материал питĕ пысăк та пулма пултарать.

Анчах та ытлашши нумай çырса кăтартни вулакана йăлăхтарма пултарать. Çитменнине хаçат страницин калăпăшĕ те вĕçсĕр мар. Кун пек чухне журналист пĕлтерĕшлĕрех фактсене суйласа илет, содержанине кура вĕсене ушкăнсене пĕрлештерет те пĕтĕмлетӳ тăвать, хăйĕн шухăшĕсене пĕлтерет. Çапла вара ку унăн **тематика отчечĕ** пулса тухать. Кунта вара автор мĕн пулса иртни пирки хăй мĕн шухăшланине те калайрать.

Тепĕр чухне çакăн пек те пулать. Сӳтсе явнă чылай проблема хушшинче паянхи куншăн чи пĕлтерĕшли пур. Журналист, паллă ĕнтĕ, ун çине тимлĕх ытларах уйăрать, ытти пирки вара хронологи йĕркипе кăна çырса кăтартать.

Анчах та кăткăсраххи – проблемăсемпе ыйтусене тарăннăн тишкерсе тунă отчет. Кун пек чухне журналистăн проблемăсене хăйĕн те тĕпчеме, коллективлă мероприятире илтнине тата курнине пурнăç факчĕсемпе танлаштарма тивет.

Енчен те информаци отчетĕнче, тĕпрен илсен, мероприятисене тулашĕнчен пăхса çутатаççĕ пулсан, **аналитика отчетĕнче** вара унăн шалти содержанине ытларах тимлĕх уйăраççĕ.

Аналитика отчечĕн тĕллевĕ – ку е вăл шухăшсен, хаклавсен, пĕтĕмлетӳсен, сĕнӳсен сыхăнăвне кăтартса парасси, хак парасси тата пĕлтерĕшне палăртасси. Кун пек чухне автор информаци отчечĕ çырнă чухнехи пек тухса калаçакансем, вĕсен сăмахĕсем, ытти событи пирки пĕтĕмĕшпех пĕлтермесен те пултарать. Сăмахран, вĕсене вăл çутатакан тематике е проблема енĕсене кура суйласа илме пултарать. Журналист тĕпе хунă интереса кура аналитика отчечĕ **ăнлантару** отчечĕ, **хаклав** отчечĕ е **программа** отчечĕ пулма пултарать.

Проблемăллă лару-тăрăвăн пулăмĕсемпе факчĕсене пĕр харăссăн май пур таран ытларах çутатас тĕллевпе редакци рейд ирттересси пирки йышăну тума пултарать. Кун пек рейда темиçе журналист хутшăнать. Вĕсен пурин те тĕллевĕ – типлă пулса тăракан пулăмсене тупса палăртасси. Кайран вара вĕсем вырăнсенче пулса курса лару-тăрупа паллашнă хыççăн отчетсем çыраççĕ. Вĕсенчен пĕри пур материала пĕрлештерсе тишкерсе рейд пирки коллективлă отчет хатĕрлет.

Кун йышши публицистика материалĕсенче факчĕсемпе событисене информатика тата аналитика мелĕсене пĕрлештерсе усă курса çутатни палăрать. Ытларах чухне информаципе аналитика жанрĕсем журнал тата телевидени публицистикинче палăраççĕ. Событисен хроники кунта сăлтавпа пĕтĕмлетӳ çыхăнăвĕпе анлăланать.

Отчета литература енчен хитрелетессин требованийĕсем питех те пысăк. Сăнарлă стилистика, ытарлăх мелĕсемпе усă курни, пулăмсем кăмăл-туйăм çине мĕнле витĕм кӳнине анлăн сăнлани ку жанра витĕмлĕрех тăваççĕ, публицистика сĕмĕ параççĕ.

Манăн тусăм Мурка

Пирĕн килте кушак пур. Вăл Мурка ятлă. Эпĕ вара ăна ачашласа чĕнетĕп. Вăл питĕ хитре. Эпĕ ăна телефонпа сăн ӳкерме юрататăп. Вăл хăй те хирĕçлемест. Хаваспах сăн ӳкерĕнет. Кайран вара сăн ӳкерчĕкĕсене унпа хăйĕнпе пĕрле пăхса савăнатпăр.

Манăн Мурка çăмламас, сăрă тĕслĕ. Умĕнче вара галстук евĕр шурă вырăн пур. Ура лапписем те шурă тĕслĕ.

Ир пулсан вăл çăвăнма пуçлать. Тĕрĕсрех каласан, хăйне хăй çулласа тасатать. Мурка ир-ирех вăранать те мяукласа ыттисене те вăратма тытăнать. Манăн кушакăм çынсене питĕ юратать. Хăнасем килсен тӳрех вĕсен чĕрçи çине ларма тăрăшать.

Муркăна пирĕн пата киле эпĕ пĕчĕкрех чухне анне илсе килнĕччĕ. Вăл ун чухне питĕ пĕчĕкчĕ. Халĕ вара самай ӳссе тĕрекленчĕ. Эпĕ кушак çурине ун чухнех питĕ юратса пăрахрăм. Çавăнтанпа пирĕн туслăх çулсем иртнĕ май çирĕпленсех пычĕ.

Хĕлле Мурка манпа хваттерте пурăнать. Эпĕ унпа выляма юрататăп. Вăл вара кунĕпе выляма та хирĕç мар. Муркăна эпĕ кунсерен сĕт те, шыв та лартса паратăп. Кăлпассипе пулăна вара питĕ кăмăллать. Апла пулин те сĕтел çине улăхмасть. Мĕншĕн тесен эпĕ ăна вăхăтра тăрантарасси пирки манмастăп.

Хĕллехи каçсенче атте диван çинче телевизор пăхса выртать. Мурка вара ун патне пырать те мяуклама пуçлать. Çапла вара вăл аттерен диван çине хăпарма ирĕк ыйтать. Хыççăн кăна диван çине хăпарать. Хăйне ачашланине питĕ юратать. Мăрлата-мăрлата сĕртĕнет.

Муркăна ытларах чухне анне тăрантарать. Апат савăтне те çуса тасатать. Ун чухне вара Мурка анне хыççăн хӳрине тăратса явăнса утать. Анне тутлă тăрантарасса кĕтет пулмалла.

Çу кунĕсенче эпир асанне патне яла каятпăр. Хамăрăн Муркăна та хваттерте пĕччен пăрахса хăвармастпăр, пĕрле илетпĕр. Ялта вара вăл хăйне питĕ ирĕклĕ тытать. Карта çине, йывăç çине те улăхса каять, пахча тăрăх та чупать. Хăш чухне шăши те тытать. Анчах та шăшине çисе яма васкамасть. Ятарласах пулĕ, эпир курччăр тесе, çенĕк умне алăк патне пырса хурать те пире йыхăрма пуçлать. Шăши тытма пултарнишĕн эпир ăна ачашласа мухтаса илсен вара питĕ савăнать.

Хырăмне тăрантарсан Мурка çывăрма питĕ юратать. Ун чухне ăна чăрмантарма кирлĕ мар. Тĕлĕксем курсах пулĕ канлĕн тĕлĕрет пулмалла. Тепĕр чухне тата месерле выртса урисемпе хырăмне çӳлелле туса çывăрнине пăхма питĕ интереслĕ.

Эпĕ хамăн кушака питĕ юрататăп. Эпĕ унпа тăтăшах вылятăп. Вăл манран пытанма тăрăшать. Эпĕ вара çип вĕçне хут татăкне çыхса хуратăп та урай тăрăх сĕтĕрме пуçлатăп. Мурка пытаннă вырăнтан тӳрех сиксе тухать те хут татăкĕ çине ыткăнать. Манăн кантрапа кăкарнă мечĕк те пур. Унпа та эпĕ Муркăпа тăтăшах вылятăп.

Ирхине аттепе анне ĕçе, эпĕ вара шкула тухса кайнă чухне Мурка питĕ тунсăхлăн юлать. Эпĕ шкултан килнĕ чухне вара вăл мана хваттерте алăк умĕнче кĕтсе илет. Мяуклатать, пĕччен пăрахса хăварнăшăн ятласшăн пулас. Анчах та эпĕ ăна тытса ачашласанах унăн тарăхăвĕ иртсе каять. Каллех эпир унпа хаваслăн выляма пуçлатпăр. Вăт çавăн пек манăн юратнă тусăм Мурка.

Петя ИВАНОВ.
Мăн Сĕнтĕр шкулĕ.

Кампур

Манăн килте тусăм пур,
Ячĕ тусăмăн – Кампур.
Мана курсан савăнать,
Ачашланма юратать.

Кунĕпелех Кампурпа
Эпĕ хатĕр выляма.
Анчах ирех тăмалла,
Кайран шкула каймалла.

Аннене пулăшмалла,
Килти ĕçе тумалла,
Автанпала чăхсене
Тырă сапса памалла.

Кампурăнах ир пулсан
Шкула кайма кирлĕ мар.
Кунĕпелех йăвалан,
Харлаттар та харлаттар.

Анчах Кампур ун пек мар,
Çĕрĕпеле çывăрмасть,
Ирпе ирех сас парать,
Мана вĕрсе вăратать.

Вырсарникун Кампурпа
Эпĕ кайрăм вăрмана.
Кампур питĕ савăнать,
Унта-кунта чупкалать.

Акă пĕр тĕм патĕнче
Кампур тытăнчĕ вĕрме.
Хамлатать те хамлатать,
Сасси инçене каять.

Чупса пытăм эп унта,
Мĕн-ха пулнă Кампура?
Чĕрĕп ларать-мĕн унта
Йĕпписемпе хупланса.

Эп каларăм Кампура:
«Ку вăл чĕрĕп, ан ятлаç.
Вăрманти чĕрчунпала
Сан юлташлă пулмалла».

Ман Кампурăм ăнланать,
Хӳрийĕпе пăтратать.
«Эп вылясшăнччĕ унпа»,
– Тесе калать пулмалла.

Кăнтăрла иртсен кăна
Таврăнтăмăр вăрмантан.
Тепĕр канмалли кун та
Çул тытăпăр вăрмана.

Денис СЕРГЕЕВ,
4-мĕш
класс.

ЖУРНАЛИСТ

информаци политикин тата массăллă коммуникацисен пурнăҫа кĕрет

«Ахах пĕрчисене суйласа илетпĕр»

Юлашки ҫулсенче пирĕн районти чылай шкулта шкул хаҫатне кăларма тăрăшаҫҫĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан Чуманкасси вăтам шкулĕнче вара ку ĕҫе йĕркелесе янăранпа вунă ҫул та иртнĕ. Апла кунта пĕрре тытăннă ĕҫе ҫултан-ҫул ачасене явăҫтарса пыма, вĕсене хаҫат ĕҫĕпе интереслентерме пĕлеҫҫĕ.

Хальхи вăхăтра шкулта директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕҫлекен ҫумне Валентина Николаевăна ҫирĕппĕнех хаҫата никĕслекенĕ тесе калама пулать. Ҫавăнпа та ăна паянхи калаҫăва чĕнтĕмĕр.

– Валентина Николаевна, айтăр-ха шкул хаҫачĕн малтанхи утăмĕсене аса илер. Мĕнрен пуҫланнă ҫак ĕҫ?

– Шкул хаҫачĕн йĕркеленсе ҫитнĕ пĕрремĕш номерне эпир шкулăн 125 ҫулхи юбилейĕ умĕн кăлартăмăр. Ҫавăнпа та вăл кăларăма шкул историйĕпе, унăн аталанăвĕпе, ăста вĕрентекенĕсемпе тата пултарулă вĕренекенĕсемпе ҫыхăнтарнăччĕ. Хаҫатăн редакторĕ пулма вăл вăхăтра шкулта вĕреннĕ Ольга Павлова вĕренекене шантăмăр. Редколлеги членĕсем хаҫат ятне те хăйсемех шухăшласа тупрĕҫ: «Жемчужина» ят суйласа илчĕҫ. Мĕншĕн ҫак ята суйланипе кăсăклансан, шкул хаҫатне ачасен чи лайăх материалĕсене, тепĕр майлă каласан, ахах пĕрчисене суйласа илмелле, терĕҫ. Тĕрĕсех, хаҫатра ҫавăн пек информаци кирлĕ те ĕнтĕ.

Ҫапах та, палăртса хăвармалла, хаҫат кăларассипе шкулта пĕр-икĕ ҫул маларах ĕҫлеме тытăннă. Вăл вăхăтра хаҫат кăларас ăсталăхпа паллашса пынă кăна теме юрать. Ҫавăнпа та хаҫата, тăтăшлăха пăхмасăр, лайăх материалсем пуханнине кура кăларнă. Пĕр вăхăт пирĕн шкулта гуманитари профиль вĕренĕвĕн шайĕнче журналистика ăсталăхĕпе элективлă курс та пулнă. Унта вуннăмĕшсен пĕр ушкăнĕ хаваспах ҫӳретчĕ. Хаҫат кăларас ĕҫе шăпах вĕсемпе пĕрле пуҫласа ятăмăр та ĕнтĕ. Сăмах май, вăл класри Ольга Павловăпа Алексей Иванов Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетне вĕренме кĕчĕҫ, унтан ăнăҫлă вĕренсе тухрĕҫ.

– Вунă ҫул хушшинче хаҫат тухма пăрахман. Ачасене ҫак ĕҫе явăҫтарма йывăр мар-и?

– Хаҫат кăларасси – ушкăнпа пурнăҫламалли ĕҫ. Ҫавăнпа та ачасене шкул хаҫатне кăларма хутшăннă унчченхи пултарулă вĕренекенсен тĕслĕхĕпе, вĕсем пурнăҫра хăйсен вырăнне тупнине каласа парса, пысăк ĕҫе пĕрле пурнăҫласан вăл тухăҫлăрах пулнине шкулти ĕҫсемпех ҫирĕплетсе явăҫтарма тăрăшатпăр.

Хаҫат кăларса тăни, пĕрремĕшĕнчен, ачасене ушкăнпа ĕҫлеме вĕрентет. Ҫав вăхăтрах ачасене тĕрлĕ профессипе паллаштармалли питĕ лайăх меслет пулса тăрать. Ачасем хыпарсене, хăйсен ытти хайлавне ҫырнă чухне шухăша тĕрĕс палăртма, калаçнине пĕтĕмлетме вĕренеҫҫĕ. Интервью хатĕрленĕ чухне калаҫăва тĕрĕс йĕркелеме хăнăхса пыраҫҫĕ. Ку енпе ĕҫлеме мана хама та интереслĕ. Хаҫат кăларасси ачасенчен хăвăртлăх та, ҫав вăхăтрах йăнăшсемсĕр ҫырассине те ыйтать. Ку пĕтĕмпех питĕ усăллă та кăсăклă. Ҫавăнпа вăтам сыпăкри классенче вĕреннĕ вăхăтра ҫак ĕҫе явăҫнисем шкултан вĕренсе тухиччен ытларахăшĕ ку ĕҫрен писмесĕр ĕлкĕрсе пыраҫҫĕ.

– Директорăн ҫумĕ пулса тимлесси ахаль те пысăк кăлăпăшлă ĕҫпе тата ответлăхпа ҫыхăннă. Мĕнле пĕтĕмпех ĕлкĕрсе пыма май килет? Хаҫат кăларасси вăл хăй тепĕр пысăк ĕҫ.

– Ĕҫĕ чăнах та питĕ нумай. Ҫавăнпа та, ман шутпа, ачасене ытларах шанмалла. Хăйсене шаннине кура вĕсен ответлăхĕ те ӳссе пырать. Ҫавăнпа та вĕсемпе пĕрле нумай ĕҫ пурнăҫлатпăр. Кăҫал шкултан вĕренсе тухнă Анастасия Тихонова, Екатерина Волкова, Вероника Николаева, вунпĕрмĕш класчен кунта вĕреннĕ Анастасия Кадыкова та пысăк ответлăхпа палăрса тăратчĕҫ. Аслăрах классенчи ачасем хаҫата хăйсемех калăплаҫҫĕ, материалсен формипе жанрĕн шайлашулăхне те, хаҫатăн пĕтĕмĕшле содержанине те йĕркелесе пыма тытăнчĕҫ.

Тата тепĕр ырă витĕм пирки те каламалла. Юлашки ҫулсенче пирĕн шкулта «Ҫамрăк журналист» кружок ĕҫлет. Ăна районти Ача-пăча пултарулăх ҫурчĕн хушма пĕлӳ паракан педагогĕ Светлана Кузьмина ертсе пырать. Ҫавна май кружокра ачасем информаци ҫырассин ăсталăхĕпе паллашаҫҫĕ. Пĕлĕвне ĕҫре тĕрĕслеҫҫĕ. Чи лайăх статьясемпе интервьюсем, ытти жанрпа ҫырнă материалсем вара шкул хаҫатĕнче кун ҫути кураҫҫĕ.

– Ҫамрăк журналистсен юхăмĕ республикăра та вăй илсе пырать. Шкул хаҫачĕпе конкурссене хутшăннă-и эсир?

– Районти Ача-пăча пултарулăх ҫурчĕ хăй кашни ҫулах шкул хаҫачĕсен конкурсне иртерет. Эпир унта яланах хутшăнатпăр, призлă вырăнсем йышăнатпăр.

Республикăри шкул тулашĕнчи ĕҫсен «Эткер» центрĕ ачасене хушма пĕлӳ парассипе пысăк проект пурнăҫлать. Проектăн пĕр пайĕ – «Медиашкола» ене аталантарасси. Эпир те ҫак енпе ĕҫлетпĕр. Кăҫал «Эткер» иртернĕ республика конкурсне те хутшăнтăмăр. Юлашки ҫулсенче тухнă хаҫатсене хаклава тăратрăмăр. Конкурсра виҫҫĕмĕш вырăн йышăнтăмăр.

Тата тепĕр конкурс пирки те каламасăр иртме ҫук. «Школа-пресс» конкурсра та хутшăнма тăрăшатпăр. Вăл ҫуллĕ шая тухрĕ ĕнтĕ. Хутшăнма ҫăмăл мар, ҫапах та хутшăнма тăрăшатпăр, мĕншĕн тесен чи кирли – ыттисен опычĕпе паллашасси.

– Шкул хаҫатĕнче мĕнле рубрикăсем тытса пыратăр?

– Материалсем тĕрлĕ рубрикăпа пичетленеҫҫĕ. Педагогика ĕҫĕн ветеранĕсем, ял тăрăхĕнчи ытти паллă ҫынсемпе ытларах чухне «Пирĕн интервью» рубрикăпа усă куратпăр. Ачасем килĕштерекен рубрикăсем: «Ыйтăм», «Правасемпе тивĕҫсем», «Професси тĕнчи» тата ытти те. Тата пирĕн хаҫатра пĕр кăсăклă рубрика пур – «Шкул ачисен рецепчĕсем». Пуҫласа ку рубрикăна Денис Степанов вĕренекенĕн кулинари рецепчĕсемпе паллаштарассине халалланăччĕ. Каярах вара ачасем ăна тата та кăсăклăрах тума урăхларах йышăну турĕҫ. Ҫапла пирĕн хаҫатра пĕтĕмпех ĕлкĕрмеллин рецепчĕсем, вăхăтпа тухҫлă усă курмалли рецептсем, лайăх вĕренессин рецепчĕсем пичетлеме тытăнчĕҫ.

Уявсем умĕн, паллах, вĕсемпе ҫыхăннă материалсем пичетленеҫҫĕ. Вĕсем Учитель кунĕпе, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕпе, Ҫĕршыв хӳтĕлевҫин кунĕпе, Ҫĕнтерӳ кунĕпе тата ытти уявпа ҫыхăннă.

– Хаҫата миҫе экземплярпа пичетлетĕр?

– Хаҫата вуншар е, сăлтавне кура, ытларах та экземплярпа пичетлетпĕр. Пуҫламăш классене валеҫсе паратпăр, библиотекăна икĕ-виҫĕ экземпляр хуратпăр. Учительсен пӳлĕмĕнче те пĕр экземпляр пур, шкулти фойере те унпа паллашма пулать. Пирĕн шкул пысăках мар, пулса иртекен событисем пирки пурте пĕлсе тăратпăр. Апла пулин те уйрăм класра мĕн пулса иртни пирки, уйрăм вĕрентекенсен тата ачасен шухăшĕсене вара хаҫат урлă кăна пĕлме пулать.

Хаҫат А4 форматпа тухса тăрать. Уявсене халалланă номерсем ытти чухнехинчен хулăнрах тухаҫҫĕ. Ун чухне редколлеги членĕсем кăна мар, шкулти ытти вĕренекен те хаҫат кăларас ĕҫе активлă хутшăнать, вĕрентекенсем те ыттисене интереслĕ хыпарсемпе паллаштарма тăрăшаҫҫĕ.

– Тавах, Валентина Николаевна, тĕплĕ калаҫушăн. Ăнăҫу сунатпăр сире ҫак ҫăмăл мар, анчах та интереслĕ ĕҫре.

– Тавах.

Сăн ӳкерчĕксенче: мĕн ҫырать-ха шкул хаҫачĕ; хаҫатăн тĕрлĕ ҫулсенчи номерĕсем.

Шурă хурăн

Шурă хурăн,
Кăтра хурăн
Ман чӳрече умĕнче.
Ĕмĕр пурăн,
Ялан пурăн
Ҫакă ҫутă тĕнчере.

Ман кушак

Манăн килте кушак пур,
Вăл хăюллă та маттур.
Ирхине вăл ҫывăрать,
Каҫхине шăши тытать.
Пĕр кунхине урама
Кăлартăм ăна уҫăлма.
Шăнтса кĕчĕ урине,
Хăлхине те сăмсине.
Ҫак кунтанпа эп ăна
Кăлармастăп урама.
Юрататăп эп ăна,
Мухтанатăп эп унпа.

ЕГОР АЛЕКСАНДРОВ.
Ярапайкасси шкулĕ.

Юратнă шкулăм

Иртсе пыраҫ ҫу кунĕсем,
Хаваслă, савăк вăхăтсем.
Кĕр алăкне яри уҫать,
Ура ярса пусма чĕнет.
Ҫу каҫипе чылай ĕҫ тунă:
Куллен туптанă сывлăха,
Шыва кĕме кӳлле ҫӳренĕ,
Тимленĕ хамăр пахчара.
Хавас кунсем пит хăвăрт иртрĕҫ,
Сисмерĕмĕр кĕр ҫитнине.
Шкула каймашкăн вăхăт ҫитрĕ,
Тытса чарма ҫук вăхăта.
Кĕр кунĕпе юратнă шкулăм
Уҫать асамлă алăкне.
Чĕнет пире йăс шăнкăравĕ
Хаваслăн парта хушшине.
Кунта кĕтеҫ учительсем –
Пĕлӳ тĕнчийĕн хуҫисем,
Хаваслă, савăк юлташсем,
Чи шанчăклă, маттур туссем.
Юратнă шкулшăн тунсăхлатпăр
Ҫу каҫипе эпир кашни.
Хаҫь ҫавăнпа хыпаланатпăр,
Курнать таҫтан шкула чупни.
Куллен-кунах такăрлататпăр
Шкула илсе пыран ҫула.
Ăмăртмалла хаҫь ăс пухатпăр,
Тимлетпĕр ҫĕн пĕлӳ илме.
Пĕлӳ илсе вĕҫсе каятпăр
Ҫĕршывăн тĕрлĕ кĕтесне.
Ҫапах нихҫан асран ямастпăр,
Мухтавлă шкулăмăр ятне.
Юратнă шкулăм, нумай эс пурăн.
Хаҫь эс ҫĕр вун ҫиччĕре кăна.
Тата нумай маттур эс курăн,
Сунатăп ыррине сана.

Чечексем ҫеҫке ҫураҫҫĕ

Чечексем ҫеҫке ҫураҫҫĕ,
Сапалаҫҫĕ илемне.
Кайăксем юрă юрлаҫҫĕ,
Савăнтараҫ кĕввипе.
Юлашки юрсем пĕтеҫҫĕ,
Хĕвел хыт пĕҫертнĕрен.
Тăвайкки енчен юхаҫҫĕ,
Шăнкăр-шăнкăр шывĕсем.
Ачасемпе вăй вылятпăр,
Сăрт ҫинче, ҫерем ҫинче.
Ҫуркуннене пит кĕтетпĕр
Туссемпе, юлташсемпе.

АНГЕЛИНА СПИРИДОНОВА.
Ҫатракасси шкулĕ.